26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ЯНВАРЬ 5 юнкун 4(6499)

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ВАТУТИНА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем тăвата кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн паян, январĕн 4-мĕшĕнче, БЕЛАЯ ЦЕРКОВЬ хулине—пысăк чугун çул узелне тата нимĕçсен оборонин питĕ вирлĕ тĕреклеткĕ пунктне—штурмласа тытса илнĕ.

БЕЛАЯ ЦЕРКОВЬ хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче ЖМАЧЕНКО генерал-лейтенантăн, МАРТИРОСЯН генерал-майорăн, АВДЕЕНКО генерал-майорăн тата артиллери генерал-майорĕн ГУСЕВĂН артиллерисчĕсем чапа тухнă.

Уйрăмăнах çаксем чапа тухнă:

КОЖИН генерал-майорăн 232-мĕш стрелковăй Сумски-Киевски дивизийĕ, КУЗНЕЦОВ полковникăн 74-мĕш стрелковăй Киевски дивизийĕ, ЗУБАРЕВ полковникăн 340-мĕш стрелковăй Сумски-Киевски дивизийĕ, Чехословаксен ССР Союзĕнчи СВОБОДА бригаднăй генерал ертсе пыракан Суворов орденлĕ 1-мĕш уйрăм бригади, МИЗЕРНЫЙ полковникăн 111-мĕш гвардейски Ленин орденлĕ гаубицăллă артиллери полкĕ, КУЛИКОВ полковникăн 33-мĕш Хĕрлĕ Ялавлă тупăллă артиллери бригади, ФИЛИМОНОВ подполковникăн 317-мĕш гвардейски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ЧЕВОЛА подполковникăн 8-мĕш гвардейски истребительнăй противотанковăй артиллери бригади, МАЛКИН майорăн 1667-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ЕВЛИЗ майорăн 493-мĕш минометнăй полкĕ, ПЕТРАКОВСКИЙ подполковникăн 16-мĕш гвардейски Киевски минометнăй полкĕ, ВЛАСЕНКО подполковникăн 328-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ, ИВАНЦЕВ подполковникăн 87-мĕш Житомирски танковăй полкĕ.

Тунă çĕнтерĕве палăртса хăварас тесе, БЕЛАЯ ЦЕРКОВЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăçсене «БЕЛОЦЕРКОВСКИ» тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чăçсене çапла чĕкмелле тăвас:

111-мĕш гвардейски Белоцерковски Ленин орденлĕ гаубицăллă артиллери полкĕ,

33-мĕш Белоцерковски Хĕрлĕ ялавлă тупăллă артиллери бригади,

317-мĕш гвардейски Белоцерковски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

8-мĕш гвардейски Белоцерковски истребительнăй противотанковăй артиллери бригади,

1667-мĕш Белоцерковски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

493-мĕш Белоцерковски минометнăй полк

328-мĕш гвардейски Белоцерковски минометнăй полк.

232-мĕш стрелковăй Сумски-Киевски дивизие, 74-мĕш стрелковăй Киевски дивизие, 340-мĕш стрелковăй Сумски-Киевски дивизие, 16-мĕш гвардейски Киевски минометнăй полка тата 87-мĕш Житомирски танковăй полка, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче темиçе хутчен те чапа тухнăскерсене, ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕсемпе наградăлама тăратас.

Чехословаксен ССР Союзĕнчи Суворов орденлĕ 1-мĕш уйрăм бригадине, БЕЛАЯ ЦЕРКОВЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнăскере, ПĔРРЕМĔШ СТЕПЕНЛĔ БОГДАН ХМЕЛЬНИЦКИЙ орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 4-мĕшĕнче 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ БЕЛАЯ ЦЕРКОВЬ хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене çĕр çирĕм тăватă тупăран вуникĕ хут пĕр харăс персе салют парать.

Пиртĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, БЕЛАЯ ЦЕРКОВЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи январĕн 4-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровенчен

ЯНВАРĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 3-мĕшĕнче НЕВЕЛЬ хулинчен сурçĕртерехри районра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, халăх пурăнакан 70 пункта тытса илнĕ, çав шутра—АКУЛИНО, КОРЗИНО, СИДОРОВО, ТРУШКОВА, ЛЕОНЦЕВО, ЛОБАЧЕВО, МЕЧЕНОВКА, МАКУЛИНО, ПЕЧУРИНО, КОЖЕМЯЧКИНО, ПУНИЩЕ, МАМОНЬКИНО, ПЕРЕДЕЛЬНИКИ, БОГДАНОВО, КРАСНОБАИХА, СМОЛЬНО, АПОНАСЕНКИ ятлă ялсене тата ГОРУШКИ, КАРАТАЙ ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă, НОВОГРАД-ВОЛЫНСКИЙ хулипе чугун çул узелне штурмласа тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 170 пункта ытла çапăçса йышăнса илнĕ, çав шутра — Житомир облаçĕнчи ОЛЕВСК, ЭМИЛЬЧИНО, БАРАНОВКА, ДЗЕРЖИНСК ятлă район центрĕсене, Киев облаçĕнчи ТЕТИЕВ ятлă район центрне, КИШИН, ПОДЛУБЫ, СЕРЕДЫ, КАТЕРИНОВКА, ГУЛЬСК, КАНУНЫ, КИЯНКА, РОГАЧЕВ, КЛИМЕНТАЛЬ, ЛЮДВИНОВКА, ВЫСОКАЯ ПЕЧЬ, КРУТАЯ, РУДНЯ, ГОРОДИЩЕ, МИХАЙЛИН, СОПИН, СПИЧИНЦЫ, ДОЛЖЕК, НАКАЗНОЕ, ТЕЛЕЖИНЦЫ, КАШПЕРОВКА, СКИБИНЦЫ, ПЯТИГОРЫ, СУХОЙ ЯР, ТОРЧИЦА, ВОЙНАРОВКА, КРИВЕЦ, ЯНЫШЕВКА, ОСТРАЯ МОГИЛА, ПАРХОМОВКА, ЕЗЕРНО, КОРЖИВКА, СОРОКОТЯГИ, ОЛЬШАНКА, СОКОЛОВКА, ЮЗЕФОВКА ятлă пысăк ялсене тата ГАРТЫ, ЭМИЛЬЧИНО, РОСКОПАНО, КАШПЕРОВКА, ДРУЦКАЯ ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка туна тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Январĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 31 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшмăнăн 8 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Невель хулинчен сурçĕртерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чăçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕнтернĕ те, малалла куçса, халăх пурăнакан 70 пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче 800 гитлеровеца çитти вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн боецсем 2 танк, 22 тупă, 12 миномет, 32 пулемет, 400 автоматпа винтовка тата снарядсемпе патронсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр гвардейски чăçăн боецĕсем пĕр кÿлĕ урлă каçнă та тăшман тăракан вырăна сасартăк вăрканса кĕнĕ. Нимĕçсем ун пек пуласса кĕтмен, вăра пĕр йĕркесĕр каялла чакнă. Пирĕн гвардеецсем нимĕçсенчен çирĕплетнĕ темиçе пункта тытса илнĕ, çавăн чухне тăшман пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Украинари 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пирĕн танковăй чăçсем, вирлĕн малалла куçса пырса, Случь шывĕ урлă каçнă та тăшман çарĕсен ушкăнне аркатса тăкнă, унтан Новоград-Волынский хули патне татса кĕнĕ. Совет танкисчĕсем нимĕç гарнизонне çавăрса илнĕ те урамсенче çапăçма пуçланă. Паян, январĕн 3-мĕшĕнче, пирĕн танкистсемпе пехотинецсем, тапăклăн штурмласа, тăшман гарнизонне аркатса тăкнă, пысăк чугун çул узелĕ тата нимĕçсен оборонин питĕ кирлĕ пункчĕ пулса тăракан Новоград-Волынский хулине тытса илнĕ. Хула патĕнче тата пысăк çухату тÿснĕ. Аркатса тăкнă нимĕç гарнизонĕн юлашкийĕсене тыткăна илнĕ. Пирĕн боецсем тупăсем, стрелок хĕçпăшалĕ тата автомашинăсем нумай тытса илнĕ, çавăн пекех тата çар пурлăхĕн темиçе пысăк складне тытса илнĕ. Пĕр соединени чăçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, Житомир облаçĕнчи Олевск ятлă район центрĕпе чугун çул станцине тытса илнĕ. Олевскшăн пынă çапăçусенче гитлеровецсен пĕр батальонне пĕтерсе тăкнă. Ытти участоксенче пирĕн çарсем, малалла тапăнса пырса, Житомир облаçĕнчи Дзержинск, Барановка, Эмильчино ятлă район центрĕсене, Киев облаçĕнчи Тетиев ятлă район центрне тата халăх пурăнакан 170 пункта ытла тытса илнĕ. Кун каçиччен нимĕçсен 5.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсенчен 25 танк, 6 бронемашина, хăй тĕллĕн çÿрекен 10 тупă, 640 автомашина тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Эмильчино районĕнче нимĕç пехотин икĕ роти пĕтĕм составĕпех Хĕрлĕ Çар енне куçнă.

* * *

Нимĕçсен 106-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 239-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейторсем Ганс Шмидтпа Пауль Краузе тата унтер-офицер Виллибальд Рихтер çапла каласа панă: «Пĕр тăтăш пынă çапăçусем пирĕн дивизие йăлтах халран ячĕç. Октябрь пĕтеспе 240-мĕш полка, салатса ярса, ытти чăçсемпе пĕрлештерчĕç. 239-мĕш полкра 2 батальон шутланса тăрать, хăйсен йышĕпе ахаль чухнехи ротăсенчен те пĕчĕкрех. Дивизи штабĕн писарĕсенчен, малти позицисене янăскерсенчен, салтаксем дивизи командирĕ генерал-лейтенант Форст 11-мĕш армейски корпусăн командованине янă донесенинче мĕн çинчен çырнине пĕлчĕç. Çав донесенире Форст çапла каланă: сентябрĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 25-мĕшне çитиччен дивизире 4.323 çын вилчĕ е йывăр аманчĕ, тенĕ. Генерал малалла çапла каланă: çын нумай хушса памасан, дивизи хăй йышăнса тăракан позицисене хÿтĕлеме пултараймасть, тенĕ».

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Краснодар крайĕнчи Голубицкая станицинче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр. Актра çапла каланă: «Тискерленсе кайнă нимĕç оккупанчĕсем мирлĕ халăха çарататчĕç, вĕлеретчĕç. Вĕсем станицăра виçĕ тĕрме тата икĕ концлагерь уçрĕç. Вĕсенче гестаповецсем тытса хупнă совет гражданĕсене асаплантаратчĕç. Мирлĕ çынсене Голубицкая масарĕ çинче тата ытти вырăнсенче те йышлăн пере-пере вĕлеретчĕç. Гитлеровецсен пуçкасаканĕсем Григорий Штеба, Николай Штеба, Елена Хамчук, Матрена Пимахина, Тамара Леурда колхозниксене тата ыттисене те нумайĕшне вĕлерчĕç. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне нимĕç захватчикĕсем халăхăн пысăк пайне ирĕксĕрлесе хăваласа кайрĕç. Нимĕçсен 646-мĕш инженерипе строительство батальонĕнчи салтаксен ятарласа тунă командисем, Штройт майор ертсе пынипе, пÿртсене çĕмĕре-çĕмĕре кĕчĕç те колхозниксене аслă çул çине приккладсемпе хăваласа кăларчĕç. Унта нимĕçсем пурне те арестлени çинчен пĕлтерчĕç, унтан вара вĕсене, вăйлăн хураллаcа пырса, Керчь проливĕ патнелле хăваласа кайрĕç. Гитлеровецсем станицăри мĕнпур шкулсене, станица совечĕн çуртне ишрĕç, чиркĕве салатрĕç, колхозниксен 168 çуртне çунтарса ячĕç, ишсе пĕтерчĕç. Пулă тытакан «Гинĕс труженикĕ» колхозра нимĕçсем парăспа тата кĕсменпе ишсе çÿрекен пĕтĕм флота, моторлă 7 катера юрăхсăра кăларчĕç, 3.000 тетеле пĕтерсе тăкрĕç. Фашистла тискер кайăксем сад пахчисенче 4.000 çырла йывăçне касса тăкрĕç тата винограднике пĕтерсе ларттрĕç. Çав преступленисемшĕн эпир çаксене айăплă тесе шутлатпăр: Штройт майора, станица комендантне Гаутмана тата нимĕçсен 646-мĕш инженерипе строительство батальонĕнчи салтаксене».

Акт çине станицăри çак çынсем алă пуснă: Яков Капуста, Лука Паценко, Захар Гриценко, Мария

Совет Союзĕн гимне çырса хатĕрленĕ çĕре хутшăннă поэтсемпе композиторсене укçа парса наградăласси çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Совет Союзĕн Государство гимнĕн сăввине çырнă çынсене — Сергей Михалкова тата Эль-Регистана 100.000 тенкĕ укçа парса наградăлас.

2. Совет Союзĕн государство гимнĕн музыкине çыракана—А. В. Александров композитора 100.000 тенкĕ укçа парса наградăлас.

3. Совет Союзĕн гимнĕн музыкине çырнă çĕре хутшăннă композиторсене çав гимнăн музыкин кашни варианчĕшĕн 4.000-шер тенкĕ укçа парса наградăлас.

Хорпа юрласан тата оркестрпа каласан мĕнле тухнине итлесе пăхма суйласа илнĕ музыкăсен авторĕсене гимн музыкин кашни варианчĕшĕн 8.000-шер тенкĕ укçа парса наградăлас.

4. Совет Союзĕн гимнĕн сăввине çырнă çĕре хутшăннă поэтсене кашнине 4.000-шер тенкĕ укçа парса наградăлас.

Гимнăн сăввине темиçе вариант çырса хатĕрленĕ поэтсене кашни çĕнĕ варианчĕшăн, композиторсем музыка çырса хатĕрленисемшĕн, 4.000-шер тенкĕ укçа парса наградăлас.

5. Совет Союзĕн гимне çырса хатĕрленĕ çĕре хутшăннă çак композиторсемпе поэтсене тав тăвас:

Композиторсене:

Н. И. Аладова, А. Н. Александрова, А. В. Александрова, Б. А. Александрова, В. А. Александрова, В. И. Анпилогова, Б. В. Асафьева, М. Ашрафине,

А. Бабаева, Л. О. Бакалова, А. Баланчивадзене, С. В. Бархударяна, В. А. Белыя, В. М. Беляева, Ю. О. Бирюкова, М. И. Блантера, М. В. Бражникова, Е. Г. Брусиловские, С. А. Бугославские,

С. Н. Василенкона, Д. С. Васильев-Буглая, М. Р. Войнштейна, В. Великанова, А. М. Веприка, Н. Вилинские, В. А. Власова,

Р. К. Габичвадзене, Г. С. Гамбурга, А. Ф. Гедикене, Р. М. Глиэра, И. Р. Гокиелине, Б. Гольдфедера, И. Гольдшмидта, М. О. Грачева, Д. Гредина (Гершфельда), В. Гуревича,

В. И. Дановские, А. Двоскича, А. Дегтерева, И. И. Дзержинские, А. А. Добрушкеса, А. В. Додонова, Г. Н. Дудкевича, З. О. Дунаевские, В. Г. Захарова, М. Зельцера, Б. И. Зейдмана, П. Н. Зимина,

Н. П. Иванов-Радкевича, И. С. Итяксова, М. Иванов-Сокольские, М. В. Иорданские,

Д. Б. Кабалевские, Б. В. Карагичева, Н. Н. Карницкаяна, С. А. Каца, М. В. Ковале, А. Козловские, А. Колосова, К. А. Корчмарева, В. Н. Кочетова, Л. К. Книппера, М. И. Красева, В. В. Красноглядована, Г. Г. Крейтнера, М. С. Криштула, В. Я. Кручинина, В. Н. Крюкова,

М. И. Лалинова, К. М. Лебедева, Ю. А. Левитина, А. Я. Лепина, Г. И. Литинские, Г. Г. Лобачева, А. Лобковские, Е. А. Луцкие, Б. Н. Лятошинские,

Н. В. Макаровăна, Ф. Макаревича, С. И. Мацюшевича, Б. С. Майзеле, Л. Месин-Полякова, В. Месмана (Львова), М. В. Мильмана, А. В. Мосолова, И. В. Морозова, А. Муравлева, В. И. Мураделине, Г. Мушеле,

В. В. Небольсина, В. В. Нечаева, И. Г. Неймарка, О. В. Никольскаяна, Ю. С. Никольские, А. Г. Новикова, Н. М. Нолинские, В. А. Оранские, Б. Орлова,

Ш. Палиашвилине, А. В. Парусинова, М. Ф. Петренкона, Е. Петрунина, В. Пирогова, И. Перегудова, Дм. Я. Покрасса, Дан. Я. Покрасса, Л. А. Половинкина, С. С. Прокопьева, С. А. Разоренова, Л. Н. Ревуцкие, И. Рунова,

Л. А. Саввăна, В. И. Садовникова, Т. Садыкова, Д. Ф. Салиман—Владимирова, О. Сандлера, А. В. Свешникова, М. И. Сахарова, М. Н. Семенова, С. З. Сендерее, М. Скорульские, Г. Сметанина, Я. С. Солодухона, Л. Б. Степанова, О. Д. Строка,

Ш. М. Тактакишвилине, Г. П. Таранова, Е. Н. Тиличеевăна, А. С. Теплицкие, А. Ф. Титова, П. Ткаченкона, Н. Н. Толстякова, И. Д. Троянова, С. Туликова, И. И. Тускияна, Ю. Тюлина,

С. Файнтуха, В. Г. Ферене, И. Финкельштейна, М. П. Фролова, В. А. Хайта, А. И. Хачатуряна, Т. Н. Хренникова, Я. Цегляра, А. Н. Цфасмана, Н. К. Чемберджине, С. А. Чернецкие, О. Чишкона, М. К. Чулакине, С. И. Шабольские, А. Шаверзашвилине, Ю. А. Шапорина, Л. А. Шварца, И. Б. Швейцера, В. А. Шварца, Б. С. Шахтера, В. П. Ширинские, И. П. Шишова, И. Г. Шорина, Д. Д. Шостаковича, М. О. Штейнберга, П. Шубина, Л. Б. Шульгина, В. В. Щербачева, В. М. Юровские.

Поэтсене:

С. Я. Алымова, М. Архангельские, Н. Н. Асеева, Айбека; Демьян Бедныя, О. Ф. Бергольца, П. Бернацкие, П. Богданова, Н. Л. Брауна, П. У. Бровкăна,

П. Д. Германа, М. С. Голодныя, В. М. Гусева, Х. Жумалиева, М. М. Замаховскаяна, М. А. Зенкевича, М. В. Исаковские, С. И. Кирсанова, О. Я. Колычева, Г. В. Кристине,

М. Лапирова, В. И. Лебедев-Кумача, С. В. Михалкова, Миртемира, Э. С. Огнецвета, Л. Руста (Е. А. Тарловскаяна), М. Ф. Рыльские, Г. Б. Саряна, М. А. Светлова, Т. С. Сикорскаяна, К. М. Симонова, П. В. Слетова,

А. Тажибаева, Н. С. Тихонова, А. Токмагамбетова, Б. А. Турганова, Т. Фаттаха, О. Шираза, С. П. Щипачева, Г. А. Эль-Регистана.

Мухтавлă патриотсем—хăйсен ĕçĕсем çинчен

Çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçлама яланах хатĕр

Аслă çулпуç Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн докладĕнче колхоз хресченĕсен ĕçне пысăка хурса хакларĕ. Колхоз хресченĕсен ĕçĕ тава тивĕçлĕ ĕç пулса тăчĕ. Çакă вăл пире тулли кăмăлпа савăнтарать.

Пирĕн Айкашри Киров ячĕпе тăракан колхоз 1943 çулта пахa çитĕнÿсем тунипе вĕçлерĕ. Эпир, уйхирте ăнса пулнă тырпулсене вăхăтра пуçтарса кĕртсе, государство умĕнчи парăмсене ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех парса татрăмăр. Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшас тесе, пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем государствăна 5.120 пăт тырă сутрĕç, çав тырра кĕске вăхăтрах хатĕрлев пунктне леçсе пачĕç. Государствăна тырă сутас тĕлĕшпе нумай колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен пысăк патриотизмне кăтартса пачĕç. Çапла, Андрей Шурбанов 62 пăт, Тимофей Сергеев 50 пăт, Максим Павлов 49 пăт сутрĕç. Государствăна 10-шар пăт е ытларах тырă сутнисем тата та нумай. Эпĕ хамăн хуçалăхра перекетленĕ тырра 82 пăт сутрăм.

Эпир, колхозниксем халĕ пĕр шухăш-кăмăлпа мухтавлă Хĕрлĕ Çара колхоз хирĕсенче стахановла ĕçлесе, çитес çулта тухăçлă тырпул туса илсе пулăшас туйăмпа ĕçлетпĕр. Пирĕн колхоз çуракине хатĕрленсе çитрĕ ĕнтĕ. Вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ, ялхуçалăх машинисене юсаса сарайсене пуçтарса лартнă. Лаша кÿлмелли хатĕрсем çителĕклĕ. Ку таранччен колхоз уйхире 2.000 лав тислĕк кăларнă, 40 центнер кĕл пухнă, 220 гектар çинче юр тытнă. Çуракине хатĕрленес ĕçре Матвеев юлташ ертсе пыракан бригада лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Шишкин юлташ бригади те унтан юлмасть.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă. Колхозра выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ çултан çул ÿссе пырать.

Эпир, колхозниксемпе колхозницăсем, хамăрăн юратнă Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçа кĕртме ялан хатĕр тăратпăр. Çĕнтерÿ тăвассишĕн хамăрăн пурлăха та, вăй-хăвата та, кирлĕ пулсан, пурнăça та шеллеменпĕр.

И. НИКОЛАЕВ,
Калинино районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз пред-

Кашни гектартан çĕр пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче пирĕн колхозри стахановецсем нумайĕшĕсем тăван çĕршыва хÿтĕлеме, нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçма кайрĕç. Апла пулсан та, колхозри тырă тухăçлăхĕ чакмарĕ, кашни çулах ÿссе пычĕ.

Иртнĕ çул эпир гектартан вăтам шутпа ыраш—15,17 центнер, тулă—15,27 центнер туса илтĕмĕр. Уйрăмăнах иккĕмĕш бригада (бригадирĕ Пчелова юлташ) аван ĕçлерĕ, унăн бригади пур тĕрлĕ тĕштырăсене гектартан вăтам шутпа 13,40 центнер туса илчĕ.

Çакăн пек пысăк тухăçлă тырпул эпир агротехникăна пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пынипе кăна туса илме пултартăмăр. Иртнĕ çул эпир уя 10—12 пин лав тислĕк кăларнă, пĕтĕм вăрлăхсене сортласа, яровизацилесе акнă.

Пирĕн колхозăн умĕнче нихăçан та нимĕнле çум курăкĕ те ÿсмен.

Ялхуçалăх машинисене эпир вăхăтра юсанă. Колхоз тимĕрçи М. М. Каринкин юлташ хамăр колхозри плугсемпе машинăсене юсаса пĕтернĕ хыççăн, кÿршĕри Тимирязев ячĕпе тăракан, «Красные Темяши» тата Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсене кайса пулăшрĕ. Эпир вĕсен плугĕсемпе сÿрисене тата машинисене юсаса патăмăр.

Государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра парса татнă хыççăн, государствăна коопераци урлă 8160 пăт тĕштырă тата 1250 пăт çĕрулми сутрăмăр. Государствăна сутнă тырра декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне Заготзерно пунктне леçсе панă. Колхозниксем хăйсем перекетленĕ тыррисенчен 2 пин пăт ытла сутрĕç.

Колхоз тимĕрçи М. М. Каринкин юлташ 75 пăт, 60 çулхи М. А. Плотников юлташ 70 пăт, граждан вăрçи инвалидĕ О. И. Зотиков 73 пăт, колхозăн сад пахчине пăхакан Л. Г. Гаврилов—59 пăт, отечественнăй аслă вăрçă инвалидĕ Ф. П. Доброхотов 80 пăт сутрĕç. Эпĕ хам 79 пăт сутрăм.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем ырми-канми ĕçлерĕç. Вĕсен пархатарлă ĕçĕсем сая каймарĕç. Колхозри стахановецсем Каринкин, Плотников, Зотиков, Гаврилов юлташсем ĕçкунĕсем тăрăх 180—200 пăт тĕштырă илеççĕ. Кăçал эпир кашни ĕçкунĕ пуçне 2 килограмм çурăшар тырă валеçрĕмĕр.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем халь çитес çуракине пиксысех хатĕрленеççĕ. Плугсене пурне те юсаса лартнă, акмалли машинăсене те çак кунсенчех юсаса пĕтеретпĕр. Вăрлăхсем пĕтĕмпех çителĕклĕ, вĕсене тасатса сортласа хунă.

Уя 4 пин лав ытла тислĕк кăлартăмăр, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл тата ытти удобренисем те пухатпăр. Агротехникăна колхозниксем пиксысех вĕренеççĕ. Урапасемпе çунасене тата ут-таврашĕсене юсаса хунă.

Çапла çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе çитетпĕр тесе калама пултаратпăр.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем кăçал гектартан вăтам шутпа 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Çак задачăна эпир пурнăçлатпăрах. Çĕршывпа фронта тырă, пахча-çимĕç тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсем кирлине эпир лайăх ăнланатпăр. Нимĕç вăрă-хурахĕсене аркатса тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе фронтри пек ĕçлеме сăмах паратпăр.

А. КЛЕМЕНТЬЕВ,
Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхоз председателĕ.

Донбасс облаçĕнчи ачасене пулăшма

СĔНТЕРВĂРРИ, январĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсем тата шкул ачисем хăйсен перекетленĕ укçа-тенкисене Донбасс облаçĕнчи ачасене пулăшнă çĕре параççĕ. Çак фонда валли Сĕнтĕрвăрри хулинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекен 50-шар тенкĕ, 4-мĕш класра вĕренекен Кутанова 35 тенкĕ пачĕç. ФЗО шкулĕнче вĕренекен Иванова, Алешкина юлташсем 60-шар тенкĕ, МТС-ра ĕçлекен комсомолка Митрофанова 300 тенкĕ, Коротков тата Сударкин юлташсем 150-шар тенкĕ пачĕç

ФРОНТРИ ПЕК ХĔРӲ ĔÇРЕ

— Пирĕн коллектив пысăк мар, ĕçлессе вара маттур ĕçлет,—тесе пуçларĕ хăйĕн сăмахне табак фабрикин директорĕ Иван Николаевич Чечеткин.

Чечеткин юлташ пĕлтернĕ тăрăх, фабрикăра ĕçлекенсенчен çурри ытла стахановецсем. Ĕç нормине тултарайманнисем кунта пачах та çук. Кашни рабочипе работница вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлеме тăрăшаççĕ. Вĕсем мĕнпур вăя, пултарулăха, тавçарулăха тăшмана çĕнтерес сехете хăвăртрах çывхартма параççĕ.

Фабрика коллективĕ августăн 29-мĕшĕ тĕлне çулталăкра продукци кăлармалли плана 101,3 процент пурнăçларĕ. Унтанпа вăл планран ирттерсе фронтпа çĕршыва пĕр миллион тенкĕлĕх продукци пачĕ.

Аслă çулпуçăмăр Сталин фронта пулăшма ытларах вăй хурса ĕçлеме кирли çинчен асăрхаттарнине асра тытса, фабрикăра ĕçлекенсем кашни кун çĕнĕ çитĕнӳсем туса пыраççĕ. Фабрикăри чи паллă стахановкăсем —Александрова, Шалякина, Якимова, Савичева, Маркина юлташсем задание тăтăшах 300—320 процент таран тултараççĕ.

— Хальхи çамрăксем нимĕнле йывăрлăхран та шикленсе тăмаççĕ. Тумалла ĕçе яланах срокчен пурнăçлаççĕ,—тет ватă рабочи Герасимчук юлташ, хастарлă çамрăксем çине кăтартса.

Фабрика коллективĕ декабрь уйăхĕнчи производство планне 10 кун хушшинче пурнăçларĕ. Кăçал фабрикăри рабочисемпе работницăсем татах та тухăçлăрах ĕçлессишĕн кĕрешеççĕ. Социализмлă ăмăрту вăйлăн сарăлса пырать. Кунти пур ĕçлекен те фронтри пек хĕрӳ ĕçре.

Ф. МАЛЫШКИН.

Артель çитĕнĕвĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Çĕнĕ Йĕкĕтри «Трудовик» артелĕн иртнĕ çулсенче çĕвĕ çĕлекен цех кăна ĕçленĕ. 1943 çул пуçланнăранпа артель темиçе çĕнĕ цех организацилерĕ. Тир сăран, çăматă тăвакан цехсем организацилерĕ. Çак цехсем çулталăк планне пурте ирттерсе тултарчĕç.

Иртнĕ çулсенче артель начар ĕçленĕ. Кăçал вара çулталăкри плана 103,6 процент тултарнă. Çăматăсем тăвакан цехра ĕçлекенсем Л. Спиридонов, И. Михайлов хăйсен кулленхи нормисене 150-шер процент тултарса пыраççĕ.

Тир тăвакан цехăн çулталăкра 6000 тир туса хатĕрлемелле пулнă. Андреевна Андриянов стахановецсем тăрăшса ĕçленипе артель çав плана 4 уйăх хушшинче тултарчĕ.

Çамрăк рабочисене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе те кăçал чылай ĕçсем тунă. Çăматăсем йăвалакан цехра çеç мастер Иванов 8 ачана çăматă тума вĕрентнĕ. Вĕсем халĕ хăйсем тĕллĕн ĕçлеме аванах вĕренсе çитрĕç.

С. ШАДИН.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Çамрăк коммунистсем

ЭЛĔК. Ехремкасси ялсоветĕнчи колхозсем кăçалхи ялхуçалăх çулне лайăх результатсемпе вĕçлерĕç. Уйри тырпула тăккаламасăр, кĕске срокра пухса кĕнĕ, ноябрь уйăхĕнче аван çапса пĕтернĕ тата 3 колхоз октябрь уйăхĕнче, пĕр колхоз ноябрьте государствăна тырă парса татнă. Кусемсĕр пуçне вĕсем ытти обязательствăсене те пĕтĕмпех пурнăçланă. Сăмахран, «1-мĕш мая» колхоз аш-какай обязательствине 1944 çулшăн пĕтĕмпех татнă, халĕ 1945 çулшăн пама тытăнчĕ.

Ялсоветри колхозниксемпе колхозницăсем пĕтĕм вăя фронта пулăшнă çĕре пама тăрăшаççĕ. Вĕсем фронтовиксем патне темиçе вунă пăт аш-какай, сĕт-çу тата алшишлĕ носкисемпе çăматăсем янă, 2-мĕш Военнăй Заема 126 пин тенкĕлĕх, лотерея билечĕсене 61 пин тенкĕлĕх çырăнса укçине çийĕнчех парса татнă.

Сталин юлташ фронта пулăшассине вăйлатма чĕнсе каланине ответлесе, ялсоветри колхозсемпе колхозниксем государствăна 8 пин пăта яхăн тырă, темиçе çĕр пăт çĕрулми тата пахча-çимĕç сутрĕç.

Ялсоветри колхозсем хăйсен умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыни кунти коммунистсем хăйсен ĕçне тĕрĕс организацилеме пĕлнинчен килет. Калас пулать, ялсоветри коммунистсем пурте пекех çамрăкскерсем. 4 коммунистран 3-шĕ ВКП(б) членĕн кандидатне кăçал май-июнь уйăхĕсенче çеç кĕнĕ. Çавăн хыççăн вара ялсоветра парти кандидачĕсен группине организациленĕ.

Коммунистсем кашниех ответлă участоксенче ĕçлеççĕ. Ялсовет исполкомĕн председателĕ пулса çамрăк коммунистка Димитриева ĕçлет. Коммунистка Кузнецова юлташ налог агенчĕ, Иванова юлташ—туллимар вăтам шкулти учительница, Александров—«Труд» колхозри сурăх ферми заведующийĕ, Семенов юлташ — райпищекомбинат управляющийĕ, вăлах парти кандидачĕсен группин руководителĕ. Хăйсен тĕп ĕçĕсене туса пынисĕр пуçне вĕсем кашниех ытти обществăллă ĕçсене активлăн хутшăнаççĕ, кашниех—агитатор. Вĕсем колхозниксене çĕршыв pa пулса иртекен событисемпе паллаштараççĕ, хăйсен большевикла тӳрĕ сăмахĕсемпе ĕçсыннисене фронтпа çĕршыва ытларах пулăшма мобилизацилеççĕ.

Иванова юлташ ертсе пынипе (вăл агитколлектив руководителĕ) октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче кăна колхозниксене 5 хутчен спектакльсемпе концертсем лартса панă, халĕ, художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленнĕ май, драмкружок К. В. Иванован «Нарспи» поэми тăрăх çырнă пьесăна лартса пама хатĕрленет.

Налог агенчĕ Кузнецова юлташ хăйĕн ĕçне отлично туса пырать. Вăл укçа-тенкĕ пухмалли плана уйăхран уйăха ирттерсе тултарать, иккĕмĕш çул ĕнтĕ районра ытти агентсенчен малта пырать. 1943 çулхи IV-мĕш квартал планне вăл 174 процент тултарнă. Кузнецова юлташ колхозниксем хушшинче агитациллĕ ăнлантару ĕçне анлăн туса пырать.

Ялсоветри коммунистсем халь çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Вĕсем тăтăшах колхозсенче пулаççĕ, колхозсен руководителĕсене конкретлă пулăшаççĕ. Паянхи куна чылай колхозсем ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтерчĕç, вăрлăхсене сортласа тасатрĕç, уя тислĕк кăларас, минераллă удобренисем пухас ĕçсем те ăнăçлăн пыраççĕ. «Труд» колхоз акă мĕнпур вăрлăхсене сортласа пĕтерчĕ, плугсем хатĕр. Çак кунсенче колхоз 80 гектар çинче юр тытса плана 100 процентчĕпех тултарчĕ, уя 600 лав ытла тислĕк кăларчĕ, 30 пăт кĕл пухрĕ.

Ялсоветри колхозсем 1943 çула ăнăçлăн вĕçлерĕç те хăйсен умне 1944 çулта тата тухăçлăрах тырпул туса илме, выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес задача лартрĕç. Çак задачăна пурнăçланă çĕрте ялти коммунистсем чăн-чăн организаторсем пулса тăрĕç.

Х. ЛИСИН.

Çапăçу хирĕнче парти ретне кĕчĕç

Пирĕн полк пĕр утăм каялла чакмасăр тăшмана çĕмĕрсе пырать. Пирĕн хыçа кунсерен ирĕке кăларнă хуласемпе ялсем тăра-тăра юлаççĕ. Тăшман, çав хуласене йышăнса илсе, пурăнмалли çуртсенчен выльăх витисем тунă, хаклă пурлăха çунтара-çунтара янă, мирлĕ çынсене асаплантарса вĕлернĕ. Ку пире тăшмана хирĕç татах та хастарлăн çапăçма чĕнет, ăна курайми тăвать. Нимĕç хура çăханĕсем мĕнпур вăйĕсене пухса пире хирĕç тăраççĕ, эпир вĕсене çĕнтеретпĕр. Çак хаяр çапăçусенче пирĕн земляксем те геройла çапăçаççĕ. Вĕсен ятне эпир мухтаса асăнатпăр.

Василий Егорович Егоров (Элĕк районĕнчи Пăва ялĕнчен) вăрçăччен «Сатурн» колхозра ĕçленĕ, колхоз хорне ертсе пынă. Вăл çапăçу хирне кĕнĕренпе ĕнтĕ икĕ çул иртрĕ. Унтанпа вăл виçĕ хутчен те аманнă, çапах та вăрçă хирĕнчен тухман. Егоров—отличник-минометчик. Нумаях пулмасть вăл ВКП(б) членĕн кандидатне кĕчĕ.

Куприян Антонович Толбасов (Ишлей районĕнчи Кивçурт Марка ялĕнчен) вăрçă пуçланнăранпах фронтра çапăçать. Ентĕ вăл çĕршер фрица «леш тĕнчене» ăсатнă. Уншăн ăна «Отличник-минометчик» значокĕпе наградăланă. Кунсăр пуçне «За отвагу» медаль памалла тунă. Ялта пурăннă чухне вăл партире тăман. Çак хаяр вăрçă кунĕсенче хăйĕн пултарулăхне палăртса большевиксен парти ретне тăчĕ.

Чăваш паттăрĕсенчен тепри вăл —Иван Яковлевич Яковлев. Вăрçăччен Ишек больницинче (Ишлей районĕ) старши врач пулса ĕçленĕ. Вăрçăн малтанхи кунĕнчен пуçласах вăл фронтра врач пулса ĕçлет. Çак хушăра миçе пин çынна вилĕмрен çăлман-ши вăл? Шучĕ те çук. Тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн вăл правительство наградине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Пирĕн земляксен мухтавлă ĕçне тылри юлташсем пĕлччĕр. Чăваш республикинчи комсомолецсемпе çамрăксем вĕсен примерне йышăнса илсе, çĕнтерӳшĕн мухтава тивĕçлĕн ĕçлеччĕр.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Мухтав орденĕн кавалерĕсен чаплă ĕçĕсем

1. КОМАНДИРАН ПУРНĂÇНЕ ÇĂЛАССИШĔН

Кĕçĕн лейтенант Василий Шакшин нумай вĕçсе çӳренĕ самолет ку хутĕнче, летчика пăхăнмасăр, вирлĕн аялалла анса пынă. Летчик, мотора пурнăç вĕрсе кĕртесшĕн пулса ăна пĕр чарăнмасăр газ парса тăнă. Боевой задание ăнăçлăн пурнăçланă хыççăн, каялла вĕçсе таврăнакан «Ильюшин—2» самолетăн çуначĕсем айĕнче çуртсем, вăрмансем, хирсем вĕлтлетсе ирте-ирте юлнă. Çĕр хăвăрт çывхарса пынă. Летчик малалла тинкерсе пăхнă. Стрелокăн — старши сержантăн Александр Бурлаковăн сасси илтĕнсе кайнă:

—Командир, эпир çĕре ӳкетпĕр. Эсир аманнă-и мĕн?

—Хам та аманнă, самолет та çĕмĕрĕлнĕ,—тесшĕн пулнă та летчик, анчах калама ĕлкĕреймен. «Ильюшин» пĕр çурт урлă вирлĕн вĕçсе каçнă та тепĕр çурта пырса шăрăннĕ, унăн улăм витнĕ çийне сирсе пăрахса, ялти урама ӳкнĕ.

Кăшт тăн кĕрсен, Бурлаков кабинăран сиксе тухнă. Самолет патне пăшал пульлисем вĕçме пуçланă. Ăна нимĕçсем пенĕ. Кунта вĕсен оборони пулнă.

Александр Бурлаков, темиçе метр аяккалла чупса кайсан, çавăрăнса пăхнă та летчик кабини хупах тăнине курнă.

— Вĕлернех-шим вара?—тесе шухăшласа илнĕ вăл. Бурлаков самолет патне каялла шуса кайнă. Нимĕç пульлисем, шăхăрса, юнашарах пыра-пыра ӳкнĕ. Анчах стрелок машина патнеллех шунă. Шуса çитсен, Бурлаков самолет çине хăпарнă та, кабинăна уçнă. Кĕçĕн лейтенант Шакшин кабинăра ларнă, пуçне каялла ывăтса ярса. Унăн сулахай аллин пĕр пӳрни таталнă, вăл çапах та газ памалли тыткăça çирĕп тытса тăнă. Летчик вилмен. Анчах вăл юнланса пĕтнĕ. Акă пĕр минă пырса ӳксе çурăлса кайнă, акă тата тепри. Александр Бурлаков командира кабинăран туртса кăларнă та ăна аяккалла йăтса кайнă. Çурри ишĕлнĕ çурт хыçĕнче вăл чарăннă та летчикăн суранĕсене çыхнă.

Бурлаковпа летчика нимĕçсем пĕр чарăнмасăр персе тăнă. Бурлаков çапах та, çĕр çумĕпе шуса пырса, хăйĕн командирне хирти госпитале илсе çитернĕ. Офицера çăлса хăварнăшăн тата хастарлăх кăтартнăшăн старши сержанта Александр Бурлакова III-мĕш степень Мухтав орденĕпе наградăланă.

2. САЛТАКАН ТАВÇАРУЛĂХĔ

Бомба пăрахмалли район тĕлĕнче кĕçĕн лейтенанта Куличенкăна нимĕç истребителĕсем атакăланă. Меллĕ маневăрсем туса, летчик пульăсенчен пăрăна-пăрăна кайнă, çапла майпа вăл стрелока—старши сержанта Палюнова тăшманăн атакисене сире-сире яма май панă. Тăшман самолечĕсем кирек хăш енчен пырса тухсан та, Палюнов вĕсем çине пулеметна шатăртаттарнă.

Нумай вăхăт хушши çапăçнă, анчах «Фокке-Вульфсем» пĕрре те пирĕн истребитель хыçне тухайман. Анчах акă патронсем пĕтсе çитнĕ. Старши сержант Палюнов сумкине уçнă та персе яман патронсене шырама тытăннă. Вăл мĕн пурĕ 6 патрон тупнă. Çав вăхăтра ăна хăваласа çӳрекен 4 истребитель çумне тата «Рама» пырса хутшăннă. Вăл совет самолетне атакăлама хатĕрленнĕ чухне Палюнов ăна пулеметпа персе янă. 6 патрон персе ярсан, «Рама» самолет ӳпĕнсе кайнă та çĕре пырса тĕрĕннĕ.

Тăшманăн 5 самолечĕпе çапăçса, старши сержант Палюнов вĕсене çĕнтернĕ. Командовани ăна хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн III-мĕш степень Мухтав орденĕпе наградăланă.

Кĕçĕн лейтенант
В. СТЕПАНЕНКО.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, январĕн 3-мĕшĕ.

Мĕнпур пионерсем, шкул ачисем, учительсем тата шкул тулашĕнчи учрежденисенче ĕçлекенсем патне академик Т. Д. Лысенко янă çыру

Хаклă юлташсем, çамрăк пионерсем, шкул ачисем, учительсем тата шкул тулашĕнчи учрежденисенче ĕçлекенсем!

В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри Ялхуçалăх Наукисен Академийĕ çамрăк натуралистсен Центральный Станцийĕпе пĕрле çĕрулми тăрри пухакансемпе ăна пăхса усракансен иккĕмĕш конкурсне пуçлани çинчен пĕлтерет.

Иртнĕ çулхи конкурса 570 пин пионерпа шкул ачи тата 6.750 шкул хутшăнчĕ. Вĕренекенсем 18 пин центнер çĕрулми тăрри тата 14 пин тонна кĕл пухнăччĕ. Çĕрулми тăррисем пухса лартни пур çĕрте те ăнăçлă пулчĕ, çĕрулми тухăçлă пулчĕ. Шкул ачисем хăйсен ĕçĕсемпе çĕршыва çĕрулми ытларах туса илме пулăшрĕç.

Тăван çĕршывпа фронт çĕрулми ыйтаççĕ. 1944 çулта çĕрулми тăррине 2—3 хут ытларах пухас, çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне татах та ӳстерес задача тăрать.

Конкурса хутшăнăр!

Конкурсăн тĕп условийĕ—конкурса хутшăннă кашни çын 5 килограмран кая мар çĕрулми тăрри пухса ăна усрасси пулса тăрать.

Çĕрулми тăрри лайăх вăрлăх пулса тăнине пурте асра тытăр. Çĕршывăн апат-çимĕç запасне ытларах ӳстерес ĕçе хастарлăн хутшăнасси кашни пионерпа шкул ачин тивĕçĕ пулса тăрать.

Конкурс пирки тăракан ыйтусем çинчен тата хăвăрăн ĕçсем мĕнле пыни çинчен Академие çак адреспа çырăр: Москва, Большой Харитоньевский переулок, дом № 21, çамрăк натуралистсен Центральнăй Станцине çак адреспа çырăр: Москва, 14, Ростокинский проезд, 3.

Академик Т. Д. ЛЫСЕНКО,
В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри Ялхуçалăх Наукисен Академийĕн Президенчĕ.

* * *

В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри Ялхуçалăх Наукисен Академийĕпе РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи çамрăк натуралистсен Центральнăй Станцийĕ конкурса 1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕпе июнĕн 1-мĕшĕ хушшинче ирттереççĕ.

Конкурса хутшăнакансен кашниннех 5 килограмран кая мар çĕрулми тăрри пухса, ăна лартас вăхăт çитиччен пăхса усрамалла, виçĕ витререн кая мар кĕл тата 2 килограмм çурă кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалла.

Конкурсăн итогĕсене малтанлăха 1944 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче, пĕтĕмлĕшĕн—июнĕн 1-мĕшĕнче пăхса тухаççĕ.

Конкурса хутшăннă шкул ачисемпе пионерсене премилеме: пĕрремĕш премисем—200-шер тенкĕлĕх 75 премии тата иккĕмĕш премисем—100-шер тенкĕлĕх 200 премии тунă.

Шкулсене, ача çуртĕсене, шкул интерначĕсене, пионерсен дружинисемпе çамрăк натуралистсен кружокĕсене тата пионерсен çурчĕсене премилеме пĕрремĕш премисем — 1000-шер тенкĕлĕх 5 премии тунă тата çавăн чухлех 500-шер тенкĕлĕх премисем тунă. Мала тухнă учреждениесен руководителĕсене премилеме 500-шер тенкĕлĕх 10 премии тата 200-шер тенкĕлĕх 10 премии тунă.

Облаçсенчи çамрăк натуралистсен чи лайăх станцийĕсем валли пĕрремĕш премии 2000 тенкĕлĕх пĕр премии (руководительне унсăр пуçне 1000 тенкĕ парса премилеççĕ), иккĕмĕш премисем 1000-шер тенкĕлĕх икĕ премии (руководителĕсене 500-шер тенкĕ парса премилеççĕ), виççĕмĕш премисем 750-шар тенкĕлĕх икĕ премии (руководительсене 200-шер тенкĕ) çирĕплетнĕ.

Писательсем пионерсем патĕнче

Январĕн 3-мĕшĕнче Шупашкарти пионерсен çуртĕнче чăваш тата вырăс писателĕсем пионерсемпе тĕл пулчĕç.

Чăваш совет писателĕсен Союзĕн председателĕ А. А. Эсхель юлташ пионерсемпе шкул ачисене чăваш писателĕсен вăрçă кунĕсенчи ĕçĕпе паллаштарчĕ.

Вечерта халăх поэчĕ—орденоносец Н. И. Полоруссов (Шелеби), С. Шавлы, К. Чулкас тата вырăс писателĕсем А. Н. Поморскипе С. В. Иванов хăйсен патриотла сăввисемпе калавĕсене вуласа пачĕç.

Пионерсем писательсене хапăл туса кĕтсе илчĕç, малашнехи творчество ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырă сунчĕç.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: тинĕс хĕрринчи çул çинче Ортонӑран çурçĕртерехре хаяр çапăçусем пынă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем хуралласа çӳренĕ.

Авиаци пысăк соединенийĕсем Итали Ривьеринчи чугун çулсене, Тернири (Вăтаçĕр Итали) сортировка станцине, тăшманăн автомобиль транспортне тата вагонĕсене атакăланă. Тăшмана пысăк сиен кӳнĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: январĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Берлина çĕнĕрен вăйлăн тапăннă. Хула çине 1.000 тонна бомба пăрахнă. «Москито» йышши самолетсем Хĕвеланăç Германири тата Çурçĕр Францири объектсене атакăланă. Самолетсен ытти соединенийĕсем тăшман шывĕсем çине минăсем пăрахса çӳренĕ. 27 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: 24 сехет хушшинче Берлин çине икĕ хут пырса бомбăсем пăрахнă. Январĕн 2-мĕшĕнче ирхине тапăннă хыççăн тухнă пушарсен тĕтĕмĕ хулана январĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тапăннă чухне те пĕлĕт пек хупăрласа тăнă. Юлашки 7 эрне хушшинче Германи столицине 10 хут тапăннă ĕнтĕ. Çав вăхăт хушшинче Берлин çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем 13.000 тонна ытла пăрахнă.

ЛАТВИ ТАТА ЭСТОНИ ПАРТИЗАНĔСЕМ ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ТАРÇИСЕНЕ ВĔЛЕРНИ

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви каланă тăрăх, нимĕçсем çапла пĕлтернĕ: оккупациленĕ совет Латвийĕнче нимĕçсем тунă полицин начальникне—Упитис генерал-лейтенанта партизансем вĕлернĕ. Оккупациленĕ совет Эстонийĕнчи вăрттăн ĕçлекен полици начальникне Тоовера та партизансем вĕлернĕ.

ЮГОСЛАВИН ХАЛĂХА ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН ÇАРĔН ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн Славонири чаçĕсем тăшманăн Горяны ялĕнчи гарнизонне тата Загребпа Белград хушшинчи тата Осиекпа Джаково хушшинчи чугун çула тапăннă. 13 сехет хушши çапăçнă хыççăн тăшман гарнизонне аркатса тăкнă. 4 йывăр тата 5 ручной пулемет, 2 миномет, 100 винтовка тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Нимĕçсен 4 танкне пĕтерсе тăкнă. Нумай гитлеровеца вĕлернĕ, çав гарнизон командирĕ пулнă капитана та вĕлернĕ.

Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн Сремăри подразделенийĕсем тăшманăн Шида сывăхĕнчи гарнизонне атакăланă та аркатса тăкнă. Партизансен çав отрядĕнчи боецсен тепĕр ушкăнĕ гитлеровецсен Страшница ялĕнчи гарнизонне ăнăçлăн тапăннă. Загреб сывăхĕнче партизансен чаçĕсем тăшман аэродромне пĕтерсе тăкнă. Банатра, Мраморка ялĕнче, партизансем 10 вагон тулă хунă склада çунтарса янă. Çав тулла Германие яма хатĕрлесе хунă пулнă. (ТАСС).

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче кĕрешекен хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: январĕн 2-мĕшĕнче Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсен оперативнăй группи, Мартин генерал ертсе пынипе, Çĕнĕ Гвинея утравĕн çурçĕр хĕррине—Финша гаванĕнчен 115 мильăра выртакан Сайдора пырса аннă. Десант антаричченех Япони позицийĕсене сывлăшран та, тинĕсрен те вăйлăн пенĕ. Пырса аннă çарсем гаваньпе аэродрома пĕр сехатусăрах йышăнса илнĕ, Япони çарĕсем вĕсене хирĕç тăман.

Адмиралтейство утравĕсем патĕнче союзниксен хуралласа çӳрекен самолечĕсем Японин икĕ грузовой суднине атакăланă, çав суднăсенчен пĕрне 9 пин тонна таяканнине, шыва путарнă, теприне сиенленĕ.

АМЕРИКĂРИ ЧУГУН ÇУЛСЕНЕ ÇАРĔÇ МИНИСТРĔН АЛЛИНЕ ПАНĂ

Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт çарĕç министрне Стимсона Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи чугун çулсене тытса тăрас ĕçе хăй аллине илме хушнă. (ТАСС).

США-ра 1943 ÇУЛТА ХĔÇПĂШАЛ МĔН ЧУХЛЕ ТУСА КĂЛАРНĂ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар промышленноçĕ туса кăларакан продукци 1943 çул пĕтнĕ тĕле питĕ нумай ӳссе кайнă. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, декабрь уйăхĕнче США-н çар промышленноçĕ туса кăларнă продукци, çулталăкĕпе шутласан, 80 миллиард доллара çитнĕ. Малашне те çавăн чухлех туса пырсан, 1944 çулта туса кăларма палăртнă плансене ытлашшипех тултараççĕ. Малтанлăха шутласа хунă тăрăх 1943 çулта туса кăларнă материалсен тата çар строительствин хакĕ 61 миллиард доллара çитнĕ. 1944 çулта çавсем валли 77,3 миллиард доллар расходлама палăртса хунă.

США-н çар промышленноçĕ кăçал тĕнĕл держависем пурте пĕрле туса кăларнинчен 2 хут ытларах продукци туса кăларать (1941 çулта Германин, Японин тата Италин çар промышленноçĕсем туса кăларнă продукци, пĕрле илсен, Америкăн çар промышленноçĕ туса кăларнă продукциран 5 хут ытла пулнă).

Малтанлăха шутласа кăларнă тăрăх, 1943 çулта США-ра 86.000 самолета яхăн туса кăларнă (1942 çулта 48.000 самолет туса кăларнă пулнă). Кунсăр пуçне, самолетсен пысăкăшĕпе йывăрĕшĕ нумай ӳснĕ.

Иртнĕ çулăн малтанхи 11 уйăхĕ хушшинче правительствăн тинĕс çар комиссийĕн верфĕсем туса кăларнă суднăсем пĕрле 17.194 пин тонна таяççĕ. Çапла вара 1944 çулта 18.889 пин тоннăлăх туса кăларма палăртнă программăна верфьсем пурнăçлама пултараççĕ.

1943 çулта çар карапĕсене 1942 çулхинчен 75 процент ытларах туса кăларнă.

1943 çулта США-ра хурçă нихăçанхинчен те нумайтарах шăратса кăларнă,—89.100 пин тонна шăратса кăларнă, урăхла каласан, 1942 çулта шăратса кăларнинчен 3,5 миллион тонна ытларах тата пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче США-ра чи нумай шăратса кăларнă чухнехинчен 80 процент ытларах шăратса кăларнă.

АНТОНЕСКУ ТАВРАШĔНЧИ ÇЫНСЕМ РУМЫНИ ХАЛĂХĔ КĂМĂЛСĂРЛАННИПЕ ПĂШĂРХАНАÇÇĔ

СТАМБУЛ, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Румынире Антонеску режимĕпе килĕшмен çынсене массăллăн арестлеççĕ. «Эйропа-пресс» ятлă гитлерла агентство Бухарестри Румыни интеллигенцийĕн паллă представителĕсем пулса тăракан 86 çынна арестленине йышăнать.

Кунсăр пуçне Бухарест сывăхĕнче çĕнĕрен темиçе çынна арестленĕ. Декабрĕн 21-мĕшĕнче Бухарестри çар трибуналĕнче «Румынине хирĕçле çынсене» 100 çынна айăплакан процесс пуçланнă.

Хальхи режимпа тата вăрçă пула халăх килĕшӳсĕр пулни Румыни пичетне çав тери пăшăрхантарса ӳкернĕ. «Порунка времий» ятлă хаçат нумаях пулмасть çапла çырчĕ: «Румынире демократие тата ирĕклĕ иллюзисене кĕтсе пурăнакан çынсем нумайланчĕç».

Гитлерăн Румынири хӳрешкисене пуринчен ытла Румыни çар ретĕнче кăмăлсăрлăх хытă сарăлни, çартан тарасси ӳсни хытă хумхантарать. Турцин «Ля тюрки» ятлă хаçачĕ юлашки вăхăтра Румыни çарĕнчен çар çыннисем тарасси анлăн сарăлса кайрĕ,—тесе çырать.

— «Çартан таракансем нумайĕшĕ —хресченсем, мĕншĕн тесен вĕсем влаççем йĕрлессинчен хăйсен ялĕсенче çăмăллăн пытанса юлма пултараççĕ».

Пĕлтерӳ

Январĕн 7-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) агитаторсемпе беседчиксем валли «Совет Союзĕн гимнĕ» темăпа калаçу пулать.

Калаçăва лектор Лебедев юлташ ирттерет.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автоуправление çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: плапа экономика отделĕн начальникĕ, старши бухгалтер, бухгалтер, çавăн пекех тата бухгалтер пулма хатĕрлекен курсра вĕренме ученниксем кирлĕ.

Бухгалтерсен курсĕнче вĕренме ăрçынсене те, хĕрарăмсене те илеççĕ, пĕлӳ тĕлĕшĕнчен вăтам шкулти 10-мĕш класран вĕренсе тухнисенчен кая мар пĕлмелле. Автоуправлени хăй укçине вĕрентет. Апат-çимĕç парса тăрать тата унсăр пуçне çăкăр карточкипе промтовар карточки парать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Союзная ул., дом 4, 2-й этаж, Автоуправление. 2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99,